# Тусанлă сарай

(калав)

## I

Нумайййăн весем. Пĕр теçеткене пĕрре çеç çитмест. Тĕрлерен çитсă, сатин кĕпе-йĕмсем тăхăннăскерсем пĕр учрежденин кил картишĕнчи тусанлă сарайĕнче шуй пуçараççĕ. Пĕри ăна калать, тепри тепĕрне калать, виççĕмĕшĕ ик уран сиксе пурне те хăйне илттересшĕн.

Ку çӳллĕ, сарлака сарайне вĕсем кашни кун пуçтарăнаççĕ. Ирхине тăхăр сехетсем хыççăн пуçтарăнаççĕ те мĕн каçчен çакăнта айкашаççĕ. Хушăран çеç урамра рессорлă тăрантас сассипе лаша таканĕ сасси чăнкăртаттарма тытăнсан уçă тăракан хапхаран учреждени çумĕпе тротуар çине чупса тухаççĕ.

— Ку кам ашшĕ пулчĕ, пит хытă вĕçтерсе иртсе кайнăскер, инженер карттуслăскер сан аçу вĕт вăл, Юрий?!

— Ман! — тесе хыттăн, пысăк çын пек каласа хурать вара Юрий. — Сан аçун кун пек карттус ĕмĕрне те пулас çук!

— Ман аттен сатто çӳçĕ... пăрçа урапи пек! — чи асли вĕсем хушшинче — сторож ачи — Çитăр. Вăл тăххăр тултарнă. Чи кеçĕнни, пиллĕк анчах тултарнăскер, машинистка хĕрĕ, Нина. Тротуар çинче çапла тавлашса кайма тăнине курсан сторож ачи Çитăр яланах сассине мĕнле те пулсăн пысăкрах тума тăрăшса:

— Ну-ну, пăрахăр волокитчиксем пек хăтланма, сарайне айтăр! — тет.

Хирĕç чĕнекен çук. Çитăра итлесе пĕрин хыççăн тепри каялла, сарайнелле, чупса кайма тытăнаççĕ. Ун пек чух час-часах ыттисенчен вăйсăртарах Нина такăнса ӳксе йĕме тытăнать.

— Ах, каллех çăмăр çăвать! — тесе хурать вара Çитăр. — Тăратăр çав йĕпе çăмăра.

«Йĕпе çăмăр» тесен Нина питĕ çилленет. Çавăнтах йĕме чарăнса сарайнелле хăех утса каять.

— Ну, тата мĕнле выльăпăр? — тесе ыйтрĕ пĕрре çавăн пек урама тухса кĕнĕ хыççăн ачасен сыхлавçи Çитăр. — Кам мĕнле вăйă пĕлет тата?

Тротуар çине тухса кĕричченех пур вăйăсене те выляса пĕтернĕ ачасем чĕнмесĕр тăраççĕ.

— Çĕнĕ вăйă тупасчĕ, киввисем йăлăхтарчĕç ĕнтĕ, — тет пĕри нумай тăрсан, Альберт ятлăçкер.

Çитăр, темĕнскерле пĕр ещĕк çине улăхса тăма та ĕлкĕрнĕскер, Альберт çапла каласан темĕншĕн, те ачасене кивĕ вăйăсем йăлăхтарнăшăн савăнса, те урăххишĕн, кулса ярать те кайран çапла каласа хурать:

— Тĕрĕс! Кивĕ вăйăсем пурне те йăлăхтарнă. Паян эпĕ сирĕн валли çавăнпа та ĕнтĕ çĕнĕ вăйă шухăшласа кăлартăм...

— Мĕнле вăйă? — пурте харăс хĕпĕртесе кайса Çитăр тăракан ещĕке кăшăлласа илеççĕ ачасем. — Тавай выльăпăр хăвăртрах!

— Паян эпĕр учрежденилле вылятпăр! — çавăнтах татса каласа хурать Çитăр.

— А мĕнле выляççĕ вара учрежденилле? — тĕлĕнеççĕ ик-виç сасă.

Çитăр, хирĕç чĕнес вырăнне, ещĕк çинчен анса ачасене пĕр сăмахсăрах кил картишне ертсе тухать.

— Альберт, вен унта пĕр ещĕк выртатъ. Ваçка, вен унта тепĕр ещĕк, — ачасене кашнине ятсемпе чĕнсе кил картишĕнчи ещĕк майлă япаласене пурне те сарайне пухма хушать Çитăр.

Ачасем кăткăсем пек сăрпалана-сăрпалана ещĕксене самант хушшинче сарай килне купалаççĕ.

— Кун пек мар, — тет Çитăр. — Ещĕксене учрежденири сĕтелсем пек майлас пулать. Ку ещĕк заведующин пултăр (пĕр-пĕр бюрократла ĕçлекен заведующин), ку — ун помощникĕн, ку — секретарĕн, кусем — тĕрлерен вактĕвексем — сĕтеллисем пулаççĕ.

Ещĕксем майланаççĕ.

— Ну халĕ ĕнтĕ пире хутсем, папкăсем кирлĕ! Вĕсемсĕр мĕнле учреждени пултăр?!

— А ăçтан тупас-ха вĕсене? — хăраса ӳкеççĕ ачасем.

— Ан шарлăр! — тет юнаса Çитăр. — Айтăр ман хыççăн! «Йĕпе çăмăр!» — Нинăна чĕнет Çитăр, — эс кунта юлатăн, асту, ниçта та ан кай!..

— Айтăр, кайрăмăр, — терĕ те тепĕр хут Çитăр тĕлĕнерех тăракан ачасене сарай çуммипе пырса тĕрлĕрен купасем, тăрантассем урлă каçара-каçара учреждени çурчĕ хыçне илсе кайрĕ. Ку тĕлте — учреждени тӳпи çине илсе улăхакан пусма...

— Ну, улăхăр ман хыççăн. Астăвăр тулькка, шăпрах пулма тăрăшăр!

Пĕрин хыççăн тепри картлашкасем çине пусса пырса тӳпе тăррине часах улăхса çитеççĕ ачасем. Тӳпере — учреждени архивĕ...

— Ну, çĕклĕр çак хутсене, мĕн вăй çитнĕ таран çĕклĕр те, паçăрхи пек шăппăн анăр та сарайĕнчи ещĕксем çине кайса хурăр!

Архив çĕлен пек чашкăрса çĕкленме тытăнать. Хутсем унталла та кунталла вĕçеççĕ. Вĕсемпе пĕрле тата çĕр çулхи тусан пĕлĕтленсе каять. Анчах ачасем ăна-кăна пăхмаççĕ. Пĕр вăхăт сăрпалансан хул айне, çурăм çине, алă çине — пурин çине те хутсем, папкăсем тиесе тӳперен аялалла анса каяççĕ.

Тепĕрер пилĕк минутран архив хучĕсем ещĕксем çине купаланаççĕ.

— Ну, учреждени пуçлăхне, пĕр-пĕр бюрократла ĕçлекен заведующине кама тăватпăр? — тет Çитăр çаннисемпе йĕп-йĕпе тарланă питне шăлса.

— Çитăра тăватпăр, Çитăра, — сухăраççĕ ачасем ĕçленĕ хушăра питрех юхма тапратнă сăмса шывне пĕчĕк чышкăсемпе тасатса.

— Çук, эп РКИ пулатăп, — тет хыттăн Çитăр. — Учреждениri бюрократланса кайнă пуçлăхсене йĕплĕ супăньпа çăваканни. Ну, кама тăватпăр бюрократланса кайнă пуçлăха? — татах ыйтать Çитăр.

— Альберт пултăр эппин...

— Çук, эпĕ те пулмастăп бюрократ, эпĕ те РКИ пулатăп, — тет хирĕç Альберт çилленнĕ сасăпа.

— Ваçкана тăвас эппин...

— Эп Альбертран хушĕ штоль мана бюрократ тума?! — тата хытăрах çилленсе çаптарса хурать Ваçка ятли. — Эп хам та РКИ пулма тивĕç!

— Юрий пултăр эппин, Юрий...

— Аннепе атте виçĕ кун пĕрмлетсе вĕтсен те килĕшместĕп бюрократ пулма! — васкамасăр та витĕмлĕ хирĕçлет Юрий. — Ав тăвăр бюрократ вырăнне Нинăна... Вăл, йĕрескер, тивĕçлĕ бюрократ пулма!

— Чăнах та! — çухăрса яраççĕ ачасем. — Кам пултăр пирĕн хушăра Нина пек бюрократ пулма тивĕçли?!

Пилĕк çулхи Нина ăна бюрократла пуçлăх вырăнĕнче вылямалла тунăшăн йĕме тытăнать. Анчах ăна вăйпах бюрократла пуçлăх ещĕкĕ хыçне кайса лартаççĕ. Нина пушшех хытă йĕрсе ярать, урисемпе ещĕке тапать.

Ку тĕлте ачасен вăййи татăлать вара... Вăйă вырăнне сасартăк Çитăр ашшĕ — сторож пырса кĕрет.

— Ăçтан илсе килнĕ эсĕр ку хутсене? — ачасем мĕн хăтланнине тавçăрса илсе хыттăн ыйтать вăл.

Ачасем, Нина çине тапăннăскерсем, Çитăр ашшĕ килсе тухнине кура (ăна «усал сухал» тесе чĕнеççĕ вĕсем хăйсем хушшинче) шăп пулса каяççĕ.

— Ах, некотнăйсем... пастай-ха эп сире! — каялла-малалла пăхкаласа хулă пекки шырама пуçлать сторож. Ăна сиссе ачасем сарайĕнчен çерçисем пек вĕçе-вĕçе тухса тараççĕ.

Пилĕк çулхи Нина, бюрократ пулассинчен çăлăннăран, йĕме чарăнса пĕчĕккĕн кулса ярать.

## II

Çитăр ашшĕ — Кирле пичче — Çитăра хытă юратать (арăмĕ çук Кирле пиччен, тахçанах вилнĕ). Çитăрпа анчах пурăнаканскер, вăл ăна ашкăнкаласан та чарсах каймасть.

«Çамрăк чухне кам ашкăнмасăр пурăнтăр ара! — шухăшлать вăл Çитăр пĕр-пĕр ашкăнмалла япала тунă пулсан. — Ашкăнман, выляман ачасем вăйсăр, имшер пулаççĕ вĕсем...»

Анчах хальхинче Çитăра лайăхах лекрĕ вара! Учреждени тăрринчи архив хучĕсене сарайне çĕмĕрсе аннăшăн хăлхаранах çавăрса тытса силлерĕ... Вăл çеç те мар, вăл çеç пулсан ытлах хурланмĕччĕ те Çитăр, урама тухса хура пуçне çĕрелле усăнтарса тăмĕччĕ.

— Штăп сарайĕнче тек ан ашкăннă пултăр! Штăп пĕр сас ан пултăр унта! Тепре курсан урăрсене кӳсĕкпе персе хуçăп! Вот некотнăй, э?! Пĕр кĕтӳ ăчапча пуçтарать те пĕтĕм çынна кӳрентерсе çӳрет-çке ĕнтĕ! Эс, мĕн, вăл хутсем хушшинче кирлĕ хутсем çук тетĕне-мĕн, тăмана?! Штăп, куçăм ан куртăр тек сире сарайĕнче!

Çапла ятласа пĕтернĕ Кирле пиччĕ Çитара. Çитăр çавăн пирки халь ĕнтĕ ним тума аптраса кайнă.

— Ăçта илсе каяс ĕнтĕ ачасене выляма, ăçта илсе каяс малашне?! Ыран ирĕхнех килсе тухаççĕ вĕт ĕнтĕ вĕсем, — мĕн тăвас?!

— Тарса пĕтрĕç, иçмасса, пĕри те юлмарĕç: ни Альпĕрчĕ, ни Юрийĕ... Вĕсем пулсан хăть виççĕн шухăшлаттăмăрччĕ, виççĕн шухăшласан, тен, мĕн те пулин шухăшласа та кăлараттăмăрччĕ-и тен... Халь... тăхăр çыншăн шухăшла пĕччен!

Тепĕр ирхине, чăнах та, ачасем яланхи пекех ирех пуçтарăнчĕç. Анчах Çитăр, вĕсенчен те иртерех тăрса хапха умне тухса тăнăскер, вĕсене кил картишне кĕртмерĕ.

— Юрамасть унта кĕме! — терĕ вăл яланхи пекех пысăк, витĕмлĕ саспа калама тăрăшса.

— Сарай пирĕн мар малашне, ăна пиртен безвозвратнă тытса илнĕ!

— Мĕншĕн?

— Мĕн пулнă апла?

— Ăҫта кайăпăр ĕнтĕ?

— Мĕн курăпăр?

Самант хушшинче Ҫитăр тавра чăмăртанса, сарая тытса илнĕшĕн калама ҫук кӳренсе, кашни хăй майлă ҫухăрса ячĕҫ ачасем.

— Вара пирĕншĕн сарай та шалккă-и?

— Эпĕр, мĕн, ҫынсем мар штолĕ?

Куҫĕсем ҫунма пуҫларĕҫ ачасен. Пĕчĕк Нина сарая тытса илнĕшĕн йĕме пуҫларĕ.

— Чарнăр, ачасем! — ыттисен сассисене путарса ҫухăратъ Ҫитăр. Ачасем, Ҫитăр калама пуҫланине кура пĕрин хыҫҫăн тепĕри ҫухăрма чаранса Ҫитăра итлеме хатĕрленеҫҫĕ.

— Айтăр-ха хула хыҫĕнчи ҫырмана! — алла сулса ҫухăрать Ҫитăр. — Малалла ăҫта, мĕнле вылямалли ҫинчен ҫавăнта калаҫăпăр. Кунта кансĕрлеҫҫĕ.

Ҫапла калать те Ҫитăр хыттăн малалла утса каять. Ачасем нихăш те хирĕҫ чĕнмесĕр Ҫитăр тыткăнне кĕрсе Ҫитăрпа пĕрле утса каяҫҫĕ. Анчах пĕчĕк Нина пĕчĕк чышкисене куҫ умне илсе пырса каллех йĕме пуҫлать.

— Эп хăрап унта кайма-а-а...

— Хăратăн тăк, ан пыр, ҫав ҫеҫ! — Нина ҫине ҫилленет пĕри. — Эх, йĕре ҫури!..

Анчах Ҫитăр Нина каллех йĕме тытăннине кура ун патне пырать те ăна алран ҫавăтать.

— Альберт, тыт ăна тепĕр аллинчен, — хушать Çитăр. — Миçе хут каланă эпĕ сире юлташа юлташ пăрахма юрамасть тесе?!

— Çав, пĕчĕкскер, мĕн пирĕн юлташ пултăр вăл?!

— Пирĕнпе вылять пулсан, пирĕн юлташ пулмасан кам юлташĕ пултăр вара вăл? Пĕчĕк çынна шеллеççĕ, мĕншĕн тесен вăл — пĕчĕккĕ...

...Урамран урама тухса, пĕр переулокран тепĕр переулока кĕрсе, темиçе кукăр туса, пынă чух тĕрлĕрен йытăсене çиллентерсе юлашкинчен хула хыçне тухрĕç ачасем.

Ун хыçĕнче, хуларан пĕр çĕр чалăшра, ем-ешĕл курăкпа тулнă тарăнах мар çырма пур. Çав çырмана, пĕр хĕвел ăшшиллĕ вырăна илсе кайрĕ Çитăр хăйсен телейсĕр, сарайсăр юлнă шайккине.

* * *

Пĕçерет хĕвел. Тем пысăкăшскер, вăл пĕчĕк ĕнсисене, çара алă-урисене пĕр хĕрхенмесĕр пĕçерет. Ĕнсесем, çара алă-урасем пĕр сисĕнмесĕр хĕрелсе, чăпарланса каяççĕ. Айри ешĕл çерем анчах кăшт сулхăн парса пулăшать хĕвелрен. Хăшĕ тăсăлса выртнăскерсем, хăшĕ ахаль ларнăскерсем, хăшĕ тата чĕркуçленнĕскерсем, вĕсем хĕвел çине кăшт çилленсе, çеремне кăшт савнă пек лараççĕ. Анчах хĕвелрен тарса пытанма, пĕр-пĕр сулхăн вырăн тупса ларма вĕсен... вăхăчĕ çук.

Хăйсенчен пĕр çаврашка туса вырнаçнă ачасем. Çаврашка варринче Çитăрпа Альберт лараççĕ. Альберт аллинче кăранташпа хут! Альберчĕ хутне çерем çине, кăранташне алла тытса пурне те курăнмалла пек тăсăлса выртнă. Çитăрĕ тутарсем пек хутланса ларнă.

— Çыратпăр-и эппин? — кăшт çĕкленсе ыйтать Çитăрĕ.

— Çыратпăр, çыратпăр, конешнă!

Ах, ма пĕлмест-ши Çитăр çырма! Альберт хутпа кăранташ тытса хут çине чăх ури пусса кайнă майлă çырма пĕлни ма кӳрентерет-ши Çитăра? Альберт пек çырма пĕлсен çак калама çук кирлĕ хута хăй çырĕччĕ вĕт ĕнтĕ Çитăр, хăй çырĕччĕ! Халь вăн, Альберт хутпа кăранташ тытса ларатъ те, ачасем пурте Альберт çине пăхаççĕ, Çитăр çине мар...

— Эс ху çырма пĕлнĕшĕн пит ан вĕç! — чăтаймасăр каласа ярать Çитăр савăнса кулкаласа ларакан Альберта чавсинчен тĕртсе. — Çакăн пек хут çырассине кам шухăшласа кăларнине ан ман! Сиртен пĕринчен те пулмасть ун пек япала шухăшласа кăларасси!

— Эп пĕрре те вĕçместĕп! — тет хирĕç Альберт. — Анчах... эс çырма пĕлменшĕн эп айăплă мар!

Ах, ку Альберт! Мĕнле пит хăюланса кайнă вăл?! Çитăра, тем тĕрлĕ япаласем шухăшласа кăларма пултаракан Çитăра, хирĕç калама хăять?! Ах, ку Альберт! Ма каларăм-ши, иçмасса, хамăн шухăша, хам çырма пĕлмен çинчех ма каларăм-ши?! Тытса илес Альбертран хутпа кăранташа та ыйтас ачасенчен: Çитăр-и, Альберт-и?

Анчах чăтать Çитăр, хăй мĕн тума шухăшланине тумасть: «Ун пек тусан хуна ху пушшех аяла хума пултаратăн», — тесе шухăшласа илет те Альберт çине çилленме пăрахнă пек пулса, яланхи пек, сассине пысăклатма тăрăшса, анчах çемçен, çапла каласа хурать:

— Эп çырма пĕлменнинче никам те айăплă мар, конешнă. Анчах, Альберт, сана килес çул пурпĕрех шкула илмеççĕ-ха, мĕншĕн тесен эс çиччĕре анчах, а эп уж тăххăрта! Мана обезательнă илеççĕ! Килте анне вĕрентни мĕскер вăл?! Вăл нимĕскер те мар, ун пек вĕренекенсене вĕренекенсем те темеççĕ...

Нумай калать Çитăр. Аллисемпе хăлаçланса, витĕмлĕ калама тăрăшса вăл Альберт пĕчĕкки çинчен, çырма пĕлсен те çаплах Çитăр чухлех пултарайманни çинчен, çавăнпа Альбертăн хăй çырма пĕлнипе мăнкăмăлланса лармалли марри çинчен нумайччен каларĕ.

— Конешнă, Альберт Çитăр чухнĕ пултараймасть! — терĕ вара Ваçça Çитăр каласа пĕтерсен, ун хыççăн ыттисем те:

— Пултараймасть, пултараймасть! — тесе шавласа кайрĕç.

— Ун пек ан çухăрăр! — халь ĕнтĕ Альберт çине тапăнакансене чарать Çитăр. — Ан çухăрăр ун пек, халех çырма пуçлатпăр! Айта çыр, Альберт!

— Мĕнле пуçлас? — тет Альберт Çитăра пăхăннă сасăпа.

«Аха, пăхăнатăн-и? — хăй ăшĕнче савăнать Çитăр. — Тоттă!» Унтан: «Ну, çыр çапла, — шухăшласа кайнă пысăк çынсем пек хăрах аллине çамкине килсе тытать Çитăр. — Çыр: эпĕр... пĕчĕк ачасем...»

Альберт, хăй пĕлнĕ таран, хут çине ӳсĕр буквăсем лартса каять, кăранташĕ такăнать, пĕр тваткал хучĕ темиçе çĕртен шăтать. Анчах Альбертпа Çитăр, йĕри-тавра пуçтарăннă ачасем çапах та кăранташпа хут çинчен куç илмесĕр хĕпĕртесе пăхса тăраççĕ.

— Çыртăн-и эпĕ мĕн каланине? — тет Çитăр хăй пĕлмен çыру çине пăхса.

— Çыртăм, — тет Альберт юлашки «м» сас паллине чăрмакласа пĕтерсе. — Малалла мĕн çырас?

— Малалла... — каллех аллипе çамкине тытать Çитăр, — малалла... протест паратпăр тесе çыр...

Альберт каллех саспаллисем чармакласа каять, каллех çамки тарлать, хучĕ шăтать.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Ирхине пынăскерсем, мĕн каç пуличченех асапланчĕç ачасем пĕр чĕрĕк листа хут çинче. Хĕвел анаспа тин ĕçе пĕтерсе çырмаран çӳле кĕпĕртетсе улăхрĕç. Унтан калама çук пысăк савăнăçпа хулана кĕрсе кайрĕç.

— Ыран ирхине пурте пуçтарнăр эппин!

— Юрать! — салтаксем пек харăс каларĕç ачасем Çитăра хирĕç.

### III

Учреждени пуçлăхĕ Иван Иванч (лайăх ĕçлекен пуçлăх) ирхине, шăп тăхăр сехетре, хăй сĕтелли хушшине ларса хутсем хушшинче темĕскер ĕçлеме пуçларĕ. Анчах нумаях ĕçлемелле пулмарĕ Иван Иванчăн. Пĕр вунă минут ларсан ун патне ăна темĕн пек тĕлĕнтерсе пĕрин хыççăн тепри тăхăр ача пырса тăчĕç... Чи малта Çитăр, ун хыççăн Альберт, вара Ваççа, Юрий, Кĕркури, Владлен, Мĕтри, Артур, чи юлашкинче — Нина...

— Сирĕн пата эпĕр протестпа килтĕмĕр, — терĕ Çитăр хăй хăюлăхне пĕтĕмпех кăларса, — акă вуласа пăхăр!..

Ачасем çине пăхса хытса кайнă Иван Иванч Çитăр паракан чĕрĕк листа хута илет те ун çине чăрмакласа пĕтернĕ сăмахсене вулама пуçлать. Унта çапла йĕркепе ак çапла сăмахсем çырса пĕтернĕ:

«Эпӗр пӗчӗк ачасем протест паратпӑр Пиртен Ҫитӑр ашшӗ Кирле пиче эпӗр вылякан сарая тытса илсе мӗншӗн тесен эпер тӳпере архив хучӗсене ҫере илсе аннӑ меншен тесен эпер учрежденилле вылянӑ меншен тесен пирен выляс килнӗ меншен тесен эпер печекке а эсер пысак ҫаванпа сирен пире тивмелле мар а пире Ҫитӑр ашшӗ Кирле пиче сарайне татх та пырсан урусене персе хуҫап тесе калат ун пек тума эпер йитӑсем мар а пӗчек ҫынсем ӳссен Ҫитӑр ашшӗ пекех пулма пултаратпӑр тата сирен пек те меншӗн тесен Альберт хута пӗлет а Ҫитӑр пӗтӗм япала шухӑшласа кӑларма пултарать Ҫакан пирки эпер протест паратпӑр меншен тесен пирен выляс килет, а ытти ҫӗрте выляма ҫук...»

Иван Иванчӑ мӗн вуласа пӗтеричченех шӑп. Ним чӗнмесӗр, ниҫта сиккеленмесӗр, хытса кайнӑ пек пулса Иван Иванчӑ ҫине пӑхса тӑчӗҫ ачасем.

«Парӗҫ-ши пирӗн хаклӑ сарая, памӗҫ-ши?» — ҫакӑн пек ыйтаҫҫӗ ачасен ҫунса тӑракан куҫӗсем.

Иван Иванчӑ ачасем панӑ хута вуласа пӗтерчӗ те тутисене сиктерсе кулса илчӗ.

— Хӑшӗ ҫырнӑ кӑна сирӗн? — ыйтрӗ вӑл ҫавӑн пекех кулса.

Ачасем темшӗн, те вӑтанса, те урӑххишӗн, чӗнмесӗр тӑраҫҫӗ. Ҫитӑрӑн та хальхинче хирӗҫ чӗнме хӑюлӑх ҫитмерӗ.

— Ну, хӑшӗ сирӗн малотец, хӑшӗ ҫырнӑ? — татах савӑнӑҫлӑ кулса ыйтать Иван Иванчӑ. «Молотец» тенине илтсен:

— Эпӗ ҫырнӑ! — терӗ Альберт васкаса.

— Ҫырасса вӑл ҫырнӑ та, анчах сӑмаххисем манӑн! — терӗ Ҫитӑр Альберта ҫавӑнтах тӳрлетсе.

— Молотец! Пултаратăр! Миçен-ха эсĕр?.. Тăххăрăн-и?! Пурте молотец, пурте!

Ачасем хăйсене ырланипе савăннăран именсе тăма пăрахаççĕ. Пĕр-пĕрин çине савăнăçлăн пăхаççĕ, кулаççĕ.

«Сарай пулать, сарая каялла параççĕ. Ну, кулатпăр ĕнтĕ Çитăр ашшĕнчен!» — çапла калаççĕ ачасен куçĕсем...

— Вот мĕнскер, — тет Иван Иванчă сĕтел хушшинчен тухса ачасем патне пырса тăрса. — Эсĕр чăнах та молотец ачасем. Çакăн пек хăюллă пулас пулать никçан та... Анчах сирĕн татах та ăс çитмен, татах та пĕрлешсе çитеймен-ха эсĕр. Эсĕр вен... хăвăра выляма сарай ыйтатăр, а эсĕр вĕт пиртен, пысăккисенчен, лайăхрах пĕрлешсен... çурт та ыйтма пултаратăр вĕт?! Каллех, вен, сире вылямалли япаласем кирлĕ, эсĕр, вен, нимле выляма аптраса, архиври хутсене салатса пĕтернĕ. Çаксем, ачасем, эсĕр лайăхрах пĕрлешменнинчен килеççĕ... Лайăхрах пĕрлешсен эсер хăвăра выляма çурт та, мĕн кирлĕ таран вылямалли япаласем те çителĕклĕ тупма пултаратăр... Пĕрлешес пулать сирĕн, çакăнта, çак учреждени çумĕнче пионер отрячĕ тăвас пулать, — вот мĕнскер. Вара эсĕр пире, пысăккисене, çурт пирки те, вылямалли япаласем пирки те темĕн чухлех тускалама пултаратăр. Хăçан та пулса кайса курнă пулĕ-çке эсер хулари пионерсен тĕп клубне?! Вен унта мĕн тĕрлĕ лайăх: ачасене мĕн кирли пĕтĕмпех пур вĕт!

— Унта эпĕр пĕрре вечера каяс тесе кайрăмăр та, пире пионерсем мар тесе кĕртмерĕç унта, — терĕ аслисенчен пĕри. — Пионерсене те билет çитмест, каккуй сире терĕç.

— Ну вот, ун чухне сире кирек ăçта та кĕртĕç вара.

— Лектрицă станцине те-и?

— Унта та.

— Хăма çуракан савăта та?

— Унта та.

— Тир савăтне те-и?

— Пур çĕре те! Ăçта пырас тенĕ, пур çĕре те кертĕçĕ...

* * *

Иван Иванчă патĕнчен тухса канашлама ĕлĕкхи сарая кайрĕç ачасем. Пĕр кана чĕнмесĕр тăрсан вĕсенчен пĕри, ку таранччен калаçсах кайманскер, Артур ятли:

— Эс, Çитăр, пултартăп тетĕн те питех пултараймастăн çав! — тесе çыпăçтарса хучĕ. — Хулари ытти ачасем пурте тенĕ пек пионера кĕрсе пӳртсенче выляççĕ, а эсĕ пире ку таранччченех тусанлă сарайĕнче вылямалла туса пытăн. Ытти ачасем пионера кĕрсе савăтсем тăрăх темĕн те пĕр курса çӳреççĕ, а эпĕр Çитăр пултарсах кайман пирки сарайĕнчен тухмасăр пурăнтăмăр..

— А уншăн вара эп айăплă-и?! — хăй айăпне таçталла сирсе пăрахма тăрăшать Çитăр. — Рас эп, темĕн чухлĕ шухăшласан та, пионера ăçта, мĕнле çырăнмаллине лайăххăнах пĕлсе çитеймен пулсан эп айăплă-и вара уншăн?! Ак халь çырăнатпăр ĕнтĕ, мĕн пит кăшкăрашмалли пур унта...

— Артур тĕрĕс калать, чăнах та Çитăр ытлашши пултарсах кайман пирĕн...

— Чăн, чăн, конешнă! Хăй пиртен аслăрах, çапах та пионерсем çинчен лайăх пĕлсе çитме пултарайман!..

Çерçисем курак çине тапăннă пек, Çитăр çине тапăнса Çитăра айăплама тытăнчĕç ачасем. Тусанлă сарайшăн пĕтĕм айăпа Çитăр çине йăвантараççĕ. Нумайччен ним чĕнмесĕр, ним тума аптраса тăрать Çитăр. Унтан сассине каллех пысăк çыннăнни пек туса ярса:

— Çук, ачасем, эп çеç мар айăплă, эп çеç мар! — тесе калама пуçлать. — Эпĕр пурте айăплă тусанлă сарайшăн, мĕншĕн тесен сирĕн те шухăшлама манăнни пекех пуç пулнă, а эсĕр пĕтĕмпех ман çине шаннă. Ман мĕнле тăхăр çыншăн пĕччен шухăшлама вăй çиттĕр?! Ман пуç вĕт Иван Иванчăнни пек пысăк мар... Вот, малашне пионера çырăнса пурте пĕрле шухăшлăпăр та пур ĕçе те тĕрĕс туса пырăпăр... Тĕрĕс калатăп вĕт, тантăшсем?!

— Чăнах та, пĕр Çитăр çеç айăплă мар тусанлă сарайшăн, — тет Альберт.

— Эпĕр те айăплă çав, — тет Юрий.

— Ну сатто малашне лайăх пулать, — тет Артур та килĕшсе. — Хĕрлĕ галстук çакатпăр, хĕрлĕ галстук!

*Рзай, В. Тусанлă сарай : [калав] // Рзай, В. Çырнисен пуххи / В. Рзай. – Шупашкар, 2004. – С. 112-121.*